17-2g



И. Н. Юркинъ.

# Урине.

Симбирскъ.
Типо-литографія Исполнительн
Комитета.

# УРИНЕ.

Ларма хӗрӗ Урине, пӗвве ҫитӗннӗ, вун-ҫиђӗ ҫулхи хӗр ађа: тап-таса питлӗ-куҫлӑ, хӗрлӗ ђӗрейлӗ, хурарах кӑна куҫ харшилӗ, ҫавракарах питлӗ, пӗђӗкҫӗ ҫӑварлӑ, тутисем, пӗђӗкҫӗ ађа тутисем пек, ҫӳп-ҫӳхе илемлӗ туталӑ, тикӗс те илемлӗ сӑмсалӑ. Ҫитленӗ ҫӳҫ ҫивтисем, алӑ хурси пек, хулӑн та вӑрӑм. Ытла илемлӗ хура куҫӗсем, йӑвашшӑн кӑна, темӗн пек,

ытараймасăр пăхса тăраççĕ... Аллисем, пӳрнисем тата шурă кăпăкран тунă пек, тап-таса, хăпарса кăна тăраççĕ; калăн вăл аллисемпе пирĕн хура халăх ĕçне ĕмĕрĕнҫе тытсата пăхмантăр, тесе. Çук, вăл ытти çынсем пекех, пур ĕçе те ĕçленĕ, анҫах çамрăк таса ӳҫĕ ăна кăна палăртман. Илемĕ унăн пĕр çавсем кăна мар халĕ: станĕ, пĕвви, çан çурăмĕ, пуçĕ, алли-хуллисем, илемлĕ теннипе илемлĕçке, пăхсан, пĕтĕмпе ытарса тăранма хал çук. Çине тăхăннă, мĕн тарăн ырă, пирĕн ҫăваш тумĕ: улаҫа кĕпи, умне çакнă ҫĕрçиттийĕ, пуç вĕçне, ҫеҫен кăна çыхнă, ҫăпар тутăрĕ, урисене тăхăннă ҫăлт-шурă тăла ҫăлхисем, сырнă хамăр ҫăваш çăпатисем, тата уйрăм темĕн тĕрлĕ илем-

лён куранса тăраççĕ. Кăкăрĕпе майĕ çине çакнă шултăра кĕмĕл тенкĕсенҫен, талирсенҫен тунă тевеҫĕпе майи, йанăралсенĕн кăкăрĕсем çине çакнă пек, пĕтĕмпе йăлтăртатса анҫах тăраççĕ. Аллисене тăхăнна çĕррисем тата ылттăн та кĕмĕл. Хăшĕ ахах куçлă, хăшĕ мерҫен куçлă, хăшĕ çырулă, хăшĕ тĕрĕлĕ; хăшне тата тепле ытла илемлĕ йавса тунă. Хăшин çине кăна пăх, пурте темĕн тĕрлĕ ĕлккен.

Çапла Урине пек кăмăла киллемелле пит илемлĕ тумланнă хамăр ҫăваш хĕрĕ çине ĕмĕр пăхса тăрсанта тăранас çук...

Ун пек илемлĕ хĕри-пăраçа ҫăнласахта хамăр ҫăваш çыннинҫен пуçне, урăх çиҫĕ йутран тен шырасанта тупас çук-и? Пирĕн

ҫӑваш хӗрӗ каламата ҫук ӗнтӗ, ҫӑнласахта илемлӗ теннипе ей илемлӗ-ҫке!...

Ларма хӗрӗ Урине пӗр тӗсӗпе те тумланнӑ тумӗсемпе кӑна илемлӗ мар халӗ; вӑл тата ӗҫленӗ ӗсӗпете ҫынна ӑсран кайптҫен тӗлӗнтерет: ӗнтӗ турашӑлневаскаса авӑрлатҫке!... Турашӑлне тура хуппи ҫине кӑртласа ҫакмассерен, тытӑнат ҫасрах васкаса авӑрлама: сулахай аллипе турашӑлне туртса ӗлкӗреймес, сылтӑм аллипе йӗкине пӗр вӗҫрен пӗтӗрсе авӑрла пуҫлат. Ҫитменнине тата йӗкине икӗ аллипе пит хытӑ кӑна ҫупса йарат. Авӑрланӑ сӗвемне вӑрӑмтарах пултӑр тесе, хӑш тухне тата сылтӑм аллине пӗр йенелле айаккалла ҫӳлелле тӑсса йарат. Йӗки пӗр ҫарӑнмасӑр

вăр-вăр-вăр-вăр-вăр ҫавrăнса, айа-лалла, урайне пĕтĕрĕнсе анса, урайĕнҙе тата темĕнҙен кăтăртат-тарса ҫавrăнса ҫӳрет. Хăй ун-ҙен те пулмаст, тытăнат ҙасрах авăрланă ҫиппине икĕ пӳрни вĕҫ-не ҙĕркеме; унтан, пӳрнисем ҫин-ҙен, тытăнат каллех йĕки ҫине ҫăмхалама: йĕкине пĕр вĕҫĕнҙен тытса, тепĕр вĕҫĕпе арки ҫине лартса, сылтăм аллипе пĕтĕрсе, ҫипне ҫăмхаласа пĕтерсен, тытă-нат татах турахуппи ҫине ҫак-нă турашăлĕнҙен ҙĕпĕтсе туртса, хĕлĕх пек, тип-тикĕс ҫип авăрла-ма. Турашăлĕнҙен малтан ҙи вă-рăм сӳсне ҙĕпĕтсе тытса, туртса пĕтĕрттерет. Ҫиппи ҙипертерех тикĕс пултăр, тесе, хăш ҙухне тата пӳрни вĕҫĕсене, кăшт сурса, йĕпетсе илет. Авăрлама пуҫланă,

турашăлĕ пĕр хĕрринҫен пĕте пуçласан, тытăнат тепĕр хĕрринҫен те ҫĕпĕтсе туртса авăрлама. Турашăлĕнҫен турахуппи çине авăрлама йурăхсăр ҫӳпĕкĕ анҫах йулсан, ун çине тата çĕнĕ турашăлне, вĕтҫеççĕ кăна кăртласа, çакса йарсан, тытăнат ăната çапла ҫасрах васкаса авăрлама. «Ех!» тет, хăй ăшĕнҫе, савăнса:— «ҫасрах авăрласа кĕçĕр çак йĕкеме тултарасҫĕ? Куллен çапла ытарайиасăр авăрласан, ерне хушшинҫе пĕр хутăрлăх çип тăвăтăм. Çăварниҫҫен, ту йарăнма тухиҫҫен, авăрласан, çавăн ҫухлĕ хутăрăм пулĕҫĕ... Çăва тухсан, хăшне шуратăтăм, хăшне тĕртĕтĕм, пир тăвăтăм. Хăшне пĕветсен, улаҫа кĕпесем тăвăтăм. Кăвак кĕпесем те пулĕҫĕç,

ӑна та тӑвӑтӑм, кӑна та тӑвӑтӑм... Хама ҫураҫҫан-тусан, хӑшӗнҫен парнелӗх тӑвӑтӑм, хӑшӗнҫен хама тӑхӑнма, хӑшинҫен тата упӑшкам вӑлли кӗпе-йӗм туса тӑхӑнтарӑтӑм», тет-те, йӗкине тата хытӑ пӗтӗм вӑйӗпе ҫуѣса йарса, савӑнса, васкаса авӑрла пуҫлат. Турахупи, вӗренерен тунӑскер, хытӑ туртса, васкаса авӑрланӑран, купӑс куланӑ пек, кӑтӑрр, кӑтӑрр, кӑтӑрр, туса, йанӑраса анҫах ларат. Унӑн йанӑранӑ аван сассине йуратнӑ пек пулса, йӗки те, тепле савӑннӑ пек, пулса, урайне хыпаланса пӗтӗрӗнсе ансан, урай ҫинҫе, тикӗс ҫӗрте, тата хытӑ кӑтӑртаттарса, ташласа ҫӳренӗ пек, шакӑртатса ҫӳрет. Вӑл ҫапла ытараймасӑр, ӗҫ ӳсӗнтӗр, тесе, вас-

каса ырӑ кӑна аварланнине кура тӑруҫӑм, уйрӑм ҫун саванса тӑрат-ҫке...

Ей катир, Урине! Мӗшӗн кӑна епӗ сан пек аварлама пӗлмес-тӗпши? Сан пек аварлама пӗлсен, епӗ те тура-хуп илсе, сана хирӗҫ ларса, иксӗмӗр пӗр-пӗринҫен ӑмӑртмалла, тулли йӗкемӗрсене ҫупа-ҫупа йарса, аварлӑтӑмӑр-ҫке!...

„Ырӑ ҫыннӑн ӗмӗрӗ кӗске.“

Урине лармаран таврӑнсан, тата пӗрер ҫул ашшӗ-амӑш килӗнҫе ӳссен, тата питрех тӗреклӗленсе илемлӗленсе кайат. Пӗвве ситӗннӗ ывӑл аҫасенӗн ашшӗ-амӑшсем ӑна курсан, темӗн тӗрлӗ сӑхланаҫҫӗ, хӑйсенӗн ывӑлне вал-

ли каҫҫа илме шухăшлаҫҫĕ. Каҫҫисем те ăна, пĕр йалтисем кăна мар, йут йалтисем те куҫ хываҫҫĕ. Курнă ҫухне унпа пĕр-икĕ ăшă сăмах кулса калаҫҫа илме тăрăшаҫҫĕ; йепле те пулин унăн ăшă кăмăлне килсе, йурама хăтланаҫҫĕ. Пĕвве ҫитĕннĕ хĕрсенҫен ҫăнласах та Урине пек илемлĕ хĕр йалта урăх пĕр хĕрте пулман. Кӳршĕ йалсенҫе те ун пекки пите-куҫа илемли пур тенни илтĕнмĕн...

Пĕре ҫапла ҫав Урине кĕвенте йăтса, витресем ҫакса, шыв хĕррине, шыв ăсса килме, шыва кайат. Шыв йăтса таврăннă тухне ăна хăйсенĕн йаленҫи пĕр каҫҫă, тытăнат аллинҫи ҫĕҫҫипе пусма. Ку, шыв йăтса пыракан, малтан ăна—кана шухăшламан-

скер, йури хăратмалла хăтланаҫ-тăр, тесе, шухăшласа, унҫан пи-тех тармас. Лешĕ ҫăнласах та пусма хăтланнине курсан, унăн куҫĕсем те урнă ҫыннăн куҫĕсем пеккине курсан, ку хăраса кăш-кăраша та пуҫлат. Вĕсенҫен инҫе мар, урамра калаҫҫа тăракан ҫын-сем, кăшкăрнă сасса илтсен, ҫа-сах вĕсем патне ҫупса пырса, кă-на, пусма хăтланакан каҫҫине, куҫ умĕнҫех Уринене пусма ирĕк памаҫҫĕ. Аллинҫи ҫĕҫҫине ҫасах ирĕксĕр туртса илеҫҫĕ. Пĕлĕсĕр, вăл вăхăтра ҫав пусма хăтланнă каҫҫийĕн ухмаха йернĕ вăхăҫĕ пулнă. Вăл йалан Уринене илем-лĕрен илме шухăшласа, ăшĕнҫе темĕн пек, ăна йуратса пурăннă. Ҫураҫҫан тусан, ăна мана каҫҫа памĕҫ, тесе, шухăшла, шухăшла,

кайран, мĕскĕн, хăй ухмаха та йернӗ...

Урине хăне ҫапла хăйсенĕн йалĕнђи кађђă, тытса, ҫĕҫĕпе пусма хăтланнăран, хăраннипе, кайран пĕтĕмпе ђире ӳкет... Ăна ҫапла кађђă тытса ҫĕҫĕпе пусма тытăннине ытти сынҫем илтсен, темĕн тĕрлĕ тĕлĕнеҫҫĕ, ăсран кайаҫҫĕ... «Мĕскĕнĕн, пурăнас кунĕ пур куран», тесе, пурте ăна темĕн тĕрлĕ шеллеҫҫĕ...

Ҫав, Уринӗне, ђирĕнђен пăртак тӳрлене пуҫланă теннине илтсенех, кађђă пуррисем, тытăнаҫҫĕ ăна йевђĕсем йăрса, ђасрах ҫураҫма. Ашшĕ—амăшĕ ăна малтан ђипертерех ђĕрĕлтĕр, тесе, кађђа парасшăн пулмаҫҫĕ:—«килте ĕҫлекенсем ҫахал», тесе, тата тепĕрер ҫул килте тытасшăн пулаҫҫĕ.

Пĕри те пĕри çураçа пуçласан, ыттисем те йевђĕсем йарса пăхтара пуçласан, пит ыйта пуçланăран:—«пăртак тӳрленсен, парăпăр та», тесен, йевђисем унĕçемĕн çураçма пыра пуçлаççĕ. Пуйансем темĕн пек ăна хăйсенĕн ывăлне валли çураçса илме тăрăшаççĕ: хулăн укçине мĕн ыйтнине пама пулаççĕ. Йут йалсенђен кађђăсем йевђĕсем çӳрете пуçланнине илтсен, кĕсем хăйсем йалĕнђисем те темĕн пек, йалти ырă хĕре йут йала ĕçерессшĕн пулмасăр, йевђисене куллен темиçĕ тапхăр вĕсем патне уттараççĕ... Йевђисем те мĕн вăйĕ çитнĕ таран, харкам хăй кађђине, унăн ашшĕ амăшне, ытти тăванĕсене, темĕн тĕрлĕ мухтаççĕ. Кађђисем тĕлĕшĕнђен уйрăм тата:—

«вăл пирĕн ерех ĕçмес, ӡĕлĕм туртмас, çын аӡисем пек, çынсемпе, ĕççе-ӳсĕрĕлсе, çапăçса туса çӳремес, усал, намăсăр сăмахсем калаçмас, хĕр аӡа пек, йăваш. Ун пек ырă çынна ку çулта шырасан та тупас çук», тесе, мухтаççĕ.

Хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ йевӡисенĕн ырă сăмахĕсене итлесе тăранаймаççĕ...

Уриненĕн те каӡӡа кайма вăхăт çитнĕрен, те йĕвӡисенĕн ырă мухтанă сăмахĕсенӡен анăранăран, ашшĕпĕ амăшĕ хай хĕрне Уриневе пер пит мухтанă çыннăн ывăлне, аван каӡӡа, кӳршĕ йала, çураççа, каӡӡа параççĕ. Пит, вăйлă туй туса илеççĕ. Хулăн укçине те нумай илеççĕ.

Туйра хĕр йĕме ларнă хĕр,

Урине, хĕр йĕнĕ ҫухне:—«ман туйа курма мĕн ҫухлĕ ҫын пухăнна, епĕ вилсенте мана курма ҫапла нумайăн пухăнĕҫ халĕ», тесе, асăнса илет. Вăл ҫапла асăннине илтсен, туй курма пынă: хĕрсем, арăмсем, ҫамрăк ҫынсем, ваттисем, вăл мĕшĕн апла асăнатши? тесе шарт тĕлĕнеҫҫĕ.

Туй хыҫĕнҫен ку, Урине, ахалте ҫирĕнҫен ҫиперех тӳрленсе ҫитейменскер, упăшки патĕнҫе ҫĕнĕрен тата ҫапла ҫирлет. Ыррăн пĕр ернете пурăнаймас, пит вăйран сулăннине сиссе, хăне ҫасах ашшĕ амăш патне леҫтерет. Вĕсенĕн килĕнҫе тата пĕр ернене йахăн ҫирлĕ вынртсан, хай ҫĕнĕ ҫын, пите темĕн тĕрлĕ хитре илемлĕскер, вилсете кайат...

Ашшĕпе амăшĕ, ҫемйисем кă-

на мар, Урине вилнĕ теннине илтсен, пĕтĕм йалĕ тĕлĕнет. Нумайĕшĕ ҫаранаймасăр йĕреҫҫĕ... Упăшкине те, хуҫашшĕпе хуҫамăшне те, пур хурăнташĕсене те:—«ҫĕнĕ кинĕр, ҫĕнĕ ҫыннăр, Уринĕр, вилҫĕ», тесе, хыпар ҫитереҫҫĕ. Вĕсем те ҫав хыпара илтсен, малтан тепле шанман пек, пулса, тĕлĕнеҫҫĕ. Унтан ҫасах лашсем кӳлтерсе вĕсем патне ҫуптарса та ҫитеҫҫĕ. Вилнĕ ҫынна курма пыракансем пӳрте лăках тулаҫҫĕ... Хăшĕ пĕр Уринене вилсе выртнине курсан:—«пирĕн пек, усалсене, вилме кирлĕҫĕ, Уринене, пите-куҫа илемлĕ ҫынна, ҫамрăкскере; пăртак пурăнма кирлĕҫĕ», тесе, шеллесе, тӳсеймесĕр йĕреҫҫĕ...

Йут ҫынсем те ҫапла ҫăтай-

масăр йĕннине курсан, ашшĕпе амăшĕ те, тăванĕсем те, упăшки те, хуҗашшĕпе хуҗамăшĕ те пур хурăнташĕсем те каçça кайса йĕрессĕ... Ĕнтĕ йĕрессĕ, тӳсме те хаљ çук...

Пĕр вилнĕ çынна темĕн тĕрлĕ йĕрсенте куççуллисемпе ҭĕртес çукне пĕлсе, виçĕ кунтан ăна масар (çăва) çине леççе пытарассĕ.

Урине туйĕнҭе ерехе пит хытă ĕçнĕ çынсенĕн мухмăрĕсем те ĕретлĕрех тӳрленсе çитеймен, хай ытлă илемлĕ Уриненĕн пумилкинҭе тата çапла, туйри пек, пит хытă ӳсĕрĕлитҭен ĕрех ĕçмелле пулса тăрат.



## И. Н. Юркинъ.

# Çырса кăларнă кĕнекесем:

1) Шÿтсем . . . . . . . . . . . . . . 5 пус.
2) Халлапсем . . . . . . . . . . . . 5 „
3) Йумахсем . . . . . . . . . . . . . 5 „
4) Ваттисенĕн сăмахĕсем . . . . . . 5 „
5) Калаçусем . . . . . . . . . . . . . 5 „
6) Хăрамайскер . . . . . . . . . . . 15 „
7) Кулаçа тăраниттен çитерни . . . 25 „
8) Урине . . . . . . . . . . . . . . . 15 „

Малтанхи пилĕк тĕрлĕ кĕнекесем сутăнса пĕтнĕ. Кайранхисем сутăнаççĕ: Тĕмпĕрте автăр патĕнте, унтан Хусанта «Хыпар» каçитĕ тухнă çĕрте. Пĕре илне тухне çĕр кĕнеке илекенсене, кĕнеке хакĕсене, кĕнеке пуçне икшер пус такарса сутатпăр. Пуштă урлă илекенсем Пуштă укçине хăйсем тÿлесе илеççĕ. Кĕнекеçем илес текепсене атĕрĕс акă çапла: **„Симбирскъ, Ярмарочная площ. д. № 97, И. Н. Юркину“.**

Хакĕ 15 пус.

Cord nue.